ЫЙТĂМ

# Мĕнле пулмалла вăл чи юратни, чи çывăххи?

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш питре).

**Денис Кузнецов, 38 çулта, Ĕпхӳ хули.**



– Хĕрарăм илемлĕ пит-куçлă, йăрăс пӳ-силлĕ, сăпайлă, тӳрĕ кăмăллă, шанчăклă пулни килĕшет. Вăл лайăх кил хуçи арăмĕ пулмалла, пурнăçра канашпа, май пур таран ĕçпе пулăшмалла.

Тӳрккес (грубые) кăмăллисене, ултавçăсене, юлхавсене, тирпейсĕрсене (неопрятные), çипуçне пăхманнисене килĕштерместĕп.

Кристина мăшăрпа икĕ ывăл ӳстеретпĕр. Уяв кунĕнче ывăлсемпе килте тирпей-илем кӳртетпĕр, урай, савăтсапа çăватпăр, тусан сăтăратпăр. Уяв кунĕнче те, ытти чух та ирхи апат хам хатĕрлеме тăрăшатăп. Çăмарта, улма, икерчĕ пĕçерме, çăмарта хăпартăвĕ, бутерброд, чей, кофе хатĕрлеме пултаратăп. Хăш чух март уйăхĕн 8-мĕшĕнче çемьепе кафене, ресторана кайма е суши-роллы, пицца заказ тума тăрăшатпăр. Мăшăрăма асăннă кун кантаратăп, массаж, спа-процедура салонĕн абонементне, тум-тир е парфюмери магазинĕн сертификатне парнелетĕп.

**Николай Федоров, 48 çулта, Ермеккей районĕ, Янăшма ялĕ.**



– Илемлĕ пит-куçлă, йăрăс пӳллĕ, чипер хĕр е хĕрарăм çине пăхма паллах кăмăллă. Эпир, арçынсем, ун пеккисем çине пăхса куçсене савăнтаратпăр. Анчах та яштака кевте-кĕлетке, çамрăклăх вăл вăхăтлăх палли çеç-ха. Çумра шанчăклă, ырă кăмăллă, ачаш, тарават, апат-çимĕç пĕçерме ăста, тăрăшуллă, ачасене лайăх пăхакан, тимлĕ хĕрарăма курас килет. Чылай чух арçынсем арăм суйланă чух хăйсен амăшĕ пеккине шыраççĕ. Мăшăра юратмалла, тимлĕх уйăрмалла, чунпа ӳт ăшшине парнелемелле. Вăл вара ирех тутлă апатпа, аш-какайран хатĕрленипе савăнтарать. Пурăнмалли условисем кирлĕ шайра пулмалла. Холодильник пушă пулсан мĕнрен пĕçертĕр-ха хĕрарăм апатне? Укçа-тенкĕ ĕçлесе илесси ытларах арçын тивĕçĕ. Çын умĕнче алăран тытăнса, ыталанса, пĕр-пĕрне чуп туса çӳрени тимлĕх уйăрни тесе шутламастăп.

Хĕрсенче, хĕрарăмсенче чи килĕшменни - пирус туртни тата ытлашши эрех-сăра ĕçни. Çĕр çине лачлаттарса суракан хĕрарăмсене тӳсме пултараймастăп.

Март уйăхĕн 8-мĕшĕнче мăшăра, хĕрĕмсене, инкесене, аслă аппасене чечексем, парнесем парса савăнтарма тăрăшатăп, шашлăк ăшалатăп. Кил хуçалăхра нихăçан та ку арçын е хĕрарăм ĕçĕ тесе шутласа тăмастăп. Мăшăрăма яланах пулăшма хатĕр. Апат пĕçерессси, чашăк-тирĕк, урай çăвасси, ĕне сăвасси маншăн хăнăхнă ĕçсем.

**Андрей Никитин, 36 çулта, Авăркас районĕ, Меселпуç ялĕ.**



– Чи кирли – хĕрарăм вучах сыхлавçи пулни. Çемье интересĕсене мала хуракан, ачасене юратакан анне, мăшăрне хисеплекен, шанчăклă, сăпайлă, çепĕç, кил хуçалăха ăста йĕркелесе пыракан, ăслă, йывăрлăха лекнĕ çынсене ялан пулăшма хатĕр, тĕрĕс йышăнусем тăвакан хĕрарăмсене хисеплетĕп. Тĕрлĕ енлĕ аталаннă, лайăх интуициллĕ хĕрсем, хĕрарăмсем килĕшеççĕ. Арçынна хĕрарăмăн пĕрлехи интересем пулсан аванрах. Этемлĕхĕн ытарайми пайĕн представителĕсем кăмăлĕпе, тум-тирĕпе те çепĕç (женственная) пулмалла. Хĕрсем, хĕрарăмсем шăлаварпа çӳрени килĕшмест, ман шутпа, кĕпе тăхăнсан вĕсем илемлĕрех те чипертерех курăнаççĕ. Пикесем ялан вăйлă пулни те аван мар пек. Кăштах хевтесĕртерех (беспомощный) чиперккесене пирĕн, арçынсен, пулăшас, хамăр хӳтлĕхе илес килет.

Чăрсăр (дерзкий), киревсĕр сăмахсемпе калаçакан, туртакан, ĕçекен хĕрарăмсене курсан кăмăл хуçăлать. Илемлĕх тени те Турă пани пулмалла, искусствăлла тутасем, куç тĕкĕсем (ресницы), кăкăрсем тунисене килĕштерместĕп. Хĕрарăм тултан çеç мар, чунĕпе те илемлĕ пулмалла. Манăн çемьере пилĕк чиперкке: юратнă мăшăр тата тăватă хĕр. Мăшăра уяв кунĕнче чечек çыххи, хĕр пĕрчисене илемлĕ лента-заколка, шăрçа-çĕрĕсем парнелесе савăнтаратăп. Кĕçĕн, çуталăкри хĕрĕм кăшт аталансан район центрне, хулана çитсе кафене кайма тытăнăпăр акă. Вăхăт пулсан уяв апатне те хатĕрлетĕп. Каçпа ачасене çывăрма вырттарсан мăшăрпа çурта çутса каçхи апат тăвапăр.

**Валерий Титов, 68 çулта, Иглин ялĕ.**



– Тӳрĕ кăмăллă, арçынсене мĕнле пур çапла йышăнакан, вак-тĕвекшĕн ӳпкелемен, темиçе çул иртсен аван мар лару-тăру çинчен астутарман хĕрарăмсене хисеплетĕп. Хĕрарăм кил-хуçалăх илсе пыма, пахча çимĕç ӳстерме пĕлмелле. Арçынна пуçарусене канашла, ĕçпе пулăшма тăрăшмалла. Вăл ырă кăмăллă, çепĕç, çи-пуçĕпе тирпейлĕ, йăнăшсемшĕн каçарма пĕлекен пулмалла.

Вăрах вăхăт çиллеснсе, хĕвĕнче чул чиксе çӳрекен хĕрарăмсене кăмăлламастăп. Кĕске ăслă, тирпейсĕр, пирус туртакан, эрех-сăрапа ытлашши иртĕнекен хĕрхĕрарăмсене килĕштерместĕп.

Март уйăхĕн 8-мĕшĕнче пирĕн пата ачасемпе мăнуксем килеççĕ. Мăшăра ирех чечек çыххи парса савăнтаратăп. Пĕр-ик кун маларах холодец хатĕрлетĕп, уяв кунĕнче шашлăк ăшалатăп.

*Инга АЛЕКСЕЕВА калаçнă.*

*Март уйăхĕн саккăрмĕшĕ умĕн тивĕçлĕ канури педагогика ĕçĕн ветеранĕсем пирки çырса пĕлтерес кăмăлăм пур. Вĕсем виççĕшĕ те Слакпуç ялĕнчи сахал мар ăрăва пĕлӳ парса пурнăç çулĕ çине кăларнă, ялти кашни килтех вĕсем чи çывăх çынсем шутланаççĕ.*

СУМЛĂ ВАТЛĂХ

# Хĕрарăмсен ватă гвардийĕ



Акă, Р.М. Петрованăх илер. Вăл вырăнти шкулта хĕрĕх ытла çул чăваш чĕлхипе литература учителĕ пулса ĕçленĕ. В.П. Павлова шкул сукмакне 44 çул хушши такăрлатса ачасене вырăс чĕлхипе литературин вăрттăнлăхĕсене алла илме пулăшнă. Пуçламăш класс учителĕ пулса ĕçленĕ З.М. Юрина 37 çул хушши шăпăрлансене пĕлӳ тĕнчипе паллаштарса çырма, вулама вĕрентнĕ.

Вера Павловна сакăр вуннăпа пырать. Римма Мироновна кĕркунне 85 çул тултармалла. Зинаида Моисеевна вара мартăн 3-мĕшĕнче тăхăр вуннă çулхи юбилейне паллă тăвать. Çулĕсем самаях пулин те вĕсем виççĕшĕ те чунĕсемпе çамрăк. Чăваш халăх поэчĕ П.Хусанкай «17 çулхи хăрăксем, çитмĕл çулхи çамрăксем пур» тенĕ пек вĕсем çулĕсене парăнмаççĕ.

Сивĕ-и, юр çăвать-и, тăман тустарать-и, хĕрарăмсен ватă гвардийĕ икĕ туя тытса урам тăрăх утать. Вĕсен тĕллевĕ – хускану тăвасси, утасси. Унсăр пуçне ялти çĕнĕлĕхсем те, çитменлĕхсем те вĕсене куç хупса иртме памаççĕ. Хисеплĕ ватăсем кашни çынпа пĕр чĕлхе тупса калаçаççĕ. Кама пулăшмалла – пулăшаççĕ. Хăйсем пулăшаймасан ял пуçлăхĕ патне çул тытаççĕ. Çак хисеплĕ ватăсем кашни çыннăн çуралнă кунне асра тытаççĕ, юбилярсене яланах саламлаççĕ. Вĕсем ялти хыпарсене çеç мар, районти, республикăри, çĕршывri хыпарсене пĕлсе тăраççĕ, мĕншĕн тесен хаçат-журнал вулаççĕ. Пĕрле сӳтсе яваççĕ, усаллисĕн хурланаççĕ.

Тивĕçлĕ канури педагогика ĕçченĕсене çывхарса килекен Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе саламласа ырлăх-сывлăх, телей, çителĕклĕ пурнăç, тăнăçлăх сунас килет. Зинаида Моисеевнăна чунтан хисепленипех сăвă йĕркисем те çуралчĕç:

Сывлăхăр çирĕп пултăр,
Куçăрсем вичкĕн курччăр,
Аллăрсем ялан ĕçлеччĕр,
Урăрсем малалла утчăр.

Ачăрсем хисеплеччĕр,
Мăнукăрсем юратчăр,
Çĕр çинче пурăнăр çапла,
Çут тĕнчепе савăнса.

Ватă гварди пирĕншĕн пысăк тĕслĕх пулса тăрать.

*Елена ДАНИЛОВА. Пелепей районĕ, Слакпуç ялĕ.*

*Вырăнти пуçарусене пулăшу памалли программа ялпоселоксенче тирпей-илем кӳртме май парать. Конкурсра çĕнтерсе пурнăç условийĕсене лайăхлатас шухăш ял çыннисене питĕрех те пĕр тĕвве пухать.*

ВЫРĂНТИ ПУÇАРУ

# Ялта çутăрах пулĕ




Эпир, Пишпӳлек районĕнчи Хушăлка ялĕн çыннисем, вырăнти пуçарусене пулăшу памалли программăна хутшăнма шутларăмăр. Татса паман ыйтусем ялта чылай. Анчах та урамсене çутăпа тивĕçтерессине ял çыннисем мала хурса йышăнаççĕ. Асăннă ыйтупа ял Канаш администрацийĕ сахал мар ĕç туса иртнерне пулсан та çакă çителĕксĕр. Хушăлка ялĕнче çутăпа кирлĕ шайра тивĕçтермен урамсем чылай. Пĕкĕ евĕр ртуть (ДРЛ) лампisene светодиоднăйсемпе улăштарасси те çивĕч тăрать.

Хатĕрленӳ ĕçне туса ирттернĕ, пуçару ушкăнне суйланă хыççăн ял çыннисем 2022 çулхи январь уйăхĕн 31-мĕшĕнче пĕтĕмлетӳ пухăвне ирттертĕмĕр. Унта пулас конкурсăн тĕп ыйтăвĕсене сӳтсе яврăмăр. Хушăлка çыннисем конкурсра çĕнтерессе, урамсенчи çутă ыйтăвне (ытларах вăл хĕллехи, çуркуннепе кĕркуннехи кунсенче çивĕч тăрать) татса парасса тем пекех шанаççĕ.

*Пуçарулăх ушкăнĕ ятĕнчен Марина ГРИГОРЬЕВА. Пишпӳлек районĕ, Хушăлка ялĕ.*

ТĔЛПУЛУ

# Çамрăк ăрăва тĕслĕх парса...

***Февраль уйăхĕн 15-мĕшĕнче Совет Союзĕн Çарĕсене Демократиллĕ Афганистан Республикинчен кăларнăранпа кăçал 33 çул çитрĕ. Анчах çулсем малаллах шăваççĕ пулин те, çав хаяр кунсем, Афганистан вут-çулăмĕ витĕр тухнă салтаксен чĕрисенче паянхи кун та упранаççĕ...***

Çак паллă пулăма асра тытса Пелепей хулинчи чăваш гимназийĕнче Афган вăрçин ветеранĕсемпе «Паттăрлăх урокĕ» иртрĕ. Сумлă хăнасем хушшинче Пелепей районĕнчи «Афган вăрçин ветеранĕсен Раççейри пĕрлĕхĕн» председателĕ Сергей Медведев тата Анатолий Герасимовпа Павел Стрельников пулчĕç.

Тĕлпулăва уçса чăваш гимназии директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Полина Кириллова тата çак йĕркесен авторĕ пухăннисен умĕнче сăмах каларĕç. Афган вăрçине миçе çамрăк хутшăнни, мĕн чухлĕн суранланни, çак вăрçа пула миçе салтак пурнăçĕ сарăмсăр татăлни пирки каласа хăварчĕç.

Ветерансем вара ачасене хăйсен салтакри кун-çулне, Афган вăрçин синкерлĕхĕпе тискерлĕхне аса илсе тĕплĕн каласа пачĕç. Çара юрăхлă пулас тесен çирĕп йĕркепе пурăнмаллине, спортпа туслă пулмаллине тата шкулта тăрăшса вĕренмеллине тĕслĕхсемпе



çирĕплетрĕç.

Ачасене хăнасем шкулта мĕнле вĕреннине те, вĕсем Афганистан çĕрĕ çине мĕнле лекни те, вăрçăри самантсем те, наградăсене мĕншĕн тивĕçни те кăсăклантарчĕ. Ветерансем пĕр ыйтăва та хуравсăр хăвармарĕç, вăрçăра пуçĕсене хунă çамрăксене те асăнчĕç. Залра чуна тивмелле юрă-кĕвĕ янăрарĕ, экран çинче Афган вăрçин хăрушă саманчĕсем пирĕн хыççăн тепри ылмашăнса пычĕç.

Сергей Медведев Калашников автоматне сӳтсе кăрни ачасене питĕ хавхалантарчĕ. Вĕренекенсем те парăмра юлмарĕç – вĕсем те хăйсен автомат сӳтсе кăрас ăсталăхне кăтартрĕç.

Çĕршыв умĕнчи тивĕçне Афганистан çĕрĕ çинче пурнăçланă вăрçă ветеранĕсем çамрăк ăру тĕрĕс-тĕкел çитĕнтĕр, Тăван çĕршыва тата унăн кун-çулне пĕлсе ӳстĕр, çар ăсталăхĕн чылай енĕпе паллаштăр тесе шкулсенчи тĕлпулусене çӳреççĕ. Çак тăрăшулăхшăн вĕсем пысăк тава, ырă сăмахсене тата хисепе тивĕç.

«Паттăрлăх урокĕ» питĕ кăсăклă иртрĕ. Вăл вĕренекенсен асĕнче чылайччен упранĕ.

*Алексей ЕМЕЛЬЯНОВ, чăваш гимназийĕн физкультурăпа ОБЖ преподавателĕ. Пелепей хули.*